Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

62 (7916) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи август (çурла) уйăхĕн 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Августăн 14-мĕшĕ – Строитель кунĕ

## 33 çул строительствăра



*Сăн ӳкерчĕкре эсир «Моргаушавтотехсервис» акционерсен уçă обществин штукатур-малярне Тамара Васильевна Николаевăна куратăр. Советскинчи профессипе техника училищине 1978 çулта пĕтернĕренпе, вăл кунта вăй хурать. Хастар ĕçĕшĕн Тамара Васильевна нумаях пулмасть «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» хисеплĕ ята тивĕçрĕ.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

**Чăваш Республикин строительство комплексĕн хисеплĕ ветеранĕсемпе еçченĕсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе саламлатăп!

Сирĕн çăмăл мар пархатарлă ĕçĕр яланах хисеплĕ тата пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çĕр-шывра пурăнакансен ырлăхĕ, вĕсен пурнăç хăтлăхĕ сирĕн ĕç пахалăхĕнчен нумай килет. Чăваш Ен строителĕсен ăсталăхне кура нумай илемлĕ архитектурăллă объектсем çĕкленеççĕ, пирĕн вĕсене хаклама тата упрама тăрăшмалла.

Чăваш Ен кашни çын пуçне пурăнмалли çурт-йĕр хута ярас енĕпе Раççейре малтисенчен пĕри шутланать. Çулсеренех республикăра культура, сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем, спорт объекчĕсем, ача сачĕсемпе шкулсем çĕкленсе хута каяççĕ, нумайăшне юсаса çĕнетеççĕ. Республикăра Раççейĕн патшалăх корпорацийĕсемпе пĕрле тăвакан пысăк объектсем çĕкленеççĕ. Çывăх вăхăтра Чăваш Енре хĕвел модулĕсен производствин хăватлă завочĕ хута кайĕ, ăна «РОСНАНО» патшалăх корпорацийĕпе пĕрле тăватпăр. Строительсен паянхи тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – «Раççей гражданĕсене – туянма май пур тата хăтлă çурт-йĕр» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса парасси.

Строительсен профессионализмĕ пире мĕн палăртнине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме май парасса шанатăп. Сире çирĕп сывлăх, телей, ырлăх, иксĕлми вăй-хăват, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ
М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ! ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Строитель кунĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир тăрăшнипе пирĕн район кунран-кун илемлĕрех те хăтлăрах пулса пырать, çынсен пурнăç условийĕсем те лайăхланса пыраççĕ. Эсир çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем çĕклетĕр, çулсем тăватăр, юсатăр. Сирĕн тăрăшулăхăра пулах районти пур ялта та çут çанталăк газĕ çунать. Çак ырлăха халĕ çĕнĕ çуртсене пурăнма кĕрекенсене парнелетĕр. Тавах сире район аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хунăшăн.

Пурне те ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, килĕшӳпе тату пурнăç сунатăп. Малашне те ялсен инфраструктурине аталантарассинче ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тумалла пултăрччĕ сирĕн. Умри тĕллевĕрсем пурнăçлансах пыччăр. Эсир çынсене парнелекен савăнăç хăвăр патăра та ырăлăхпа таврăнтăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ
Ю. ИВАНОВ.**

Паян – Физкультурник кунĕ

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Кашни çын пурнăçĕнче физкультурăпа спорт уйрăм вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем пире вăй кӳреççĕ, кăмăла çирĕплетеççĕ, ӳте пиçĕхтереççĕ, хавхалантараççĕ тата хамăра шанса пурăнма пулăшаççĕ. Шăпах хусканусем тунипе, сывă пурнăç йĕркине тытса пынипе çын яланах ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен илемлĕ, ыттисемшĕн интреслĕ пулать, ĕç рынокĕнче конкуренцие хутшăнма пултарать. Çапла майпа вăйлă çын аталанса йĕркеленет.

Спортпа туслă Чăваш Енĕн мухтанмалли пур. Пирĕн ентеш-чемпионсене çĕр-шывра çеç мар, тĕнчере те лайăх пĕлеççĕ. Ăнсăртран мар ĕнтĕ республика Раççей тата пĕтĕм тĕнче шайĕсенчи сумлă ăмăртусене ирттермелли арена пулса тăчĕ. Спортсменсем, тренерсем, спорт ветеранĕсем ӳрĕк-сӳрĕк пулманнипе, яваплăха туйнипе, хастарлăх кăтартнипе тата ырми-канми тăрăшнипе республикăра ирттерекен ăмăртусем асра юлаççĕ.

Республикăри физкультурăпа спорт занятийĕсене ирттеремелли майсем анлăлансах пыраççĕ. Пирĕн патра çĕнĕ спорт керменĕсем çĕкленеççĕ, чаплă стадионсемпе спорт лапамĕсем уçăлаççĕ. Унта хальхи оборудовани тата куракансемшĕн меллĕ трибунăсем вырнаçтарнă. Çывăх вăхăтрах Чăваш Енре Раççейĕн Спортпа туризм министерстви пулăшнипе спортăн республикăри приоритетлă енĕсемпе олимп хатĕрленĕвĕн регионсенчи тăвата центрне тума пуçлаççĕ, çакă пысăк кăтартусем тăвакан спортсменсене хатĕрлеме пулăшĕ.

Пурне те çирĕп сывлăх, хавхалану, çĕнĕ çитĕнӳсем тата лайăх кăмăл-туйăм сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ
М. ИГНАТЬЕВ.**

**Хисеплĕ физкультурниксем, спортсменсем, спортпа туслă çынсем тата физкультура юхăмĕн ветеранĕсем!**

Сире Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Физкультурăпа спорт пире çирĕп сывлăхлă пулма, кăмăла çирĕплетме пулăшаççĕ. Сывлăхлă, çирĕп кăмăл-туйăмлă, сывă пурнăç йĕркипе пурăнакансем вара кирек епле йывăрлăха та çĕнтерме пултараççĕ, умри тĕллевсене пурнăçлаççĕ, район тĕрекĕ пулса тăраççĕ. Çавăнпа та ачасене мĕн пĕчĕкрен спортпа туслă пулма вĕрентмелле пирĕн. Ку енĕпе кăçал вĕрентӳ ĕçне те ырă çĕнĕлĕх кĕрет: шкулта эрнере тепĕр физкультура урокĕ хушăнать.

Эсир хăвăрăн ĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçлани савăнтарать. Сирĕн пуçарулăхăрпа тăрăшулăхăра пулах ĕнтĕ пирĕн ентешсем республика шайĕнче çеç мар, Раççей, Европа, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хутшăнаççĕ. Хутшăнаççĕ çеç мар, çĕнтерӳсем туса районăн ятне-сумне çĕклеççĕ. Тавах сире пархатарлă ĕçшĕн. Малашне те физкультурăпа спорт районта пурăнакансемшĕн кун йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăтăр.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, тулли кăмăл сунатăп. Спортра малалла та ăнăçу хыççăн ăнăçу тумалла пултăр. Пурнăç çулĕ уçăлнăçемĕн уçăлса пытăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ
Ю. ИВАНОВ.**

## Кĕрхи ĕçсемпе паллашнă

Ĕçлĕ визит

Августăн 8-мĕшĕнче пирĕн районта ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕн çумĕ, ял хуçалăх министрĕ С.В. Павлов пулнă. Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа вĕсем Суворов яч. хис., Чапаев яч. хис., Е. Андреев яч. хис., «Свобода» хуçалăхсенче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче пулса курнă. Сергей Владимирович вырма ĕçĕсем, выльăх апачĕ хатĕрлесси, кĕрхи культурăсем акасси мĕнле пынипе интересленнĕ.

Суворов яч. хис. хуçалăхра кĕрхи культурăсен хирне çитсе курнă. Кунта вырма ĕçĕсем анлă сарăлнă. Кĕрхи тулăна вырса пĕтернĕпе пĕрех. 307 гектартан 297 гектар çинче ĕç-пуçа вĕçленĕ ĕнтĕ. Тухăç гектар пуçне вăтамран 31 центнерпа танлашать. С.В. Павлов районти комбайнерсен ăмăртăвĕнче малта пыракан Р.В. Кузнецова хăйĕн юратнă профессине – çĕр ĕçне парăннăшăн тав тунă, малашне те ăнăçусем суннă.

Пысăк хăна йĕтем çинче те пулнă. Кунта ĕçлекенсем ĕçшĕн тӳлессипе те, ăна вăхăтра панипе те кăмăллă пулнине палăртнă.

Чапаев яч. хис. хуçалăхра Сергей Владимирович вырма ĕçĕсемпе пĕрлех кукуруза çитĕнтерессипе те интересленнĕ. Сăмах май кукурузăна кăçал 4 хуçалăхра – Ильич яч. хис., Чапаев яч. хис., «Ударник» хуçалăхсенче тата «Путь Ильича» агрофирмăра ӳстереççĕ.

«Моргаушская» чăхчĕп фабрикинче пулнă май С.В. Павлов тырă типĕтекен бригада ĕçченĕсемпе калаçнă. Каласа хăвармалла, кунта кăçал вырма ĕçĕсене районта чи малтан пуçăннă.

Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра улăма хыççăнах пуçтарса тирпейлесе пыни килĕшнĕ. Тыр-пул тухăçĕ та хуçалăхра пĕчĕк мар, гектар пуçне вăтамран 30,4 центнер тивет.

«Свобода» хуçалăхра вырма ĕçĕсем епле пынине, кĕрхи культурăсем акассине пăхнă. Хуçалăхра çурхи тĕш тырă культурисене те пухса кĕртме тытăннă ĕнтĕ.

«Халĕ çанталăкĕ те çĕр ĕçченĕсемшĕн питĕ меллĕ. Çавăнпа та кашни минучĕ хаклă. Вырмара васкаварлă пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ»,– палăртнă Сергей Владимирович.

**Хамăр инф.**

## Тимлĕх уйăрмалли ыйтусем пур-ха

Лару

Уй-хирти пур ĕçе вăхăтра хатĕрленсе çитес, хăй вăхăтĕнче тата пахалăхлă туса ирттерес, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес, ял хуçалăх техникипе инкек-синкексĕр усă курас тата туса илнĕ ял хуçалăх культурисене сыхласа хăварас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи августăн 4-мĕшĕнчи 368 № хушăвĕпе районта ятарлă штаб йĕркеленĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать.

Августăн 10-мĕшĕнче асăннă штабăн пĕрремĕш ларăвĕ иртрĕ. Ăна штаб ертӳçин çумĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.А. Калинин ертсе пычĕ.

Район администрацийĕн пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тăрăх çирĕплетсе тухнă ответлă ĕçченĕсем вырăнсенчи лару-тăрупа паллаштарчĕç, лайăххипе пĕрлех ĕçри чăрмавсемпе çитменлĕхсем çинче те чарăнса тăчĕç.

Лару итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май Владимир Аркадьевич çавна палăртрĕ. Вырма ирттернипе пĕрлех хуçалăхсенче выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем те чарăнса лармалла мар. Уйрăмах сĕтеклĕ апат – силоспа сенаж – хатĕрлесси çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Вĕсене хатĕрлемелли вăхăт иртсе пырать.

Çитес çулхи тухăç пирки те паян шухăшлас пулать. Хăш-пĕр хуçалăхсенче кĕр аки ирттерме çĕр хатĕрлесси «уксахлать». Кĕр аки ирттермелли оптималлă вăхăт вара августăн 20-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 15-мĕшĕччен.

Техникăна йĕркеллĕ ĕçлеттерессипе вĕсене çунтармалли тата сĕрмелли материалсемпе епле тивĕçтерни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку ыйтăва та куç ытамĕнчен вĕçертмелле мар.

Кунсăр пуçне тата пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен те манма юрамасть, техникăпа усă курнă чухне ĕçре инкек-синкек ан пултăр.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Пĕрлехи информаци кунĕ

## Ял çыннисемпе тĕл пулĕç

Августăн 17-мĕшĕнче районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн теми – Чăваш Республикин 2011 çулхи пĕрремĕш çур çулти экономикăпа социаллă аталанăвĕн итогĕсем; вĕренӳ учрежденийĕсене 2011–2012 çулсенчи çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлесе çитересси мĕнле пыни; пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсене хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрлесе çитересси мĕнле пыни.

Информаци ушкăнĕсем ялсенче пулаççĕ, ял çыннисемпе, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулаççĕ, актуаллă ыйтусем çине хуравлаççĕ.

Район уй-хирĕсенче

## Тухăç япăх мар

**Районĕпе ĕнерхи кун тĕлне тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 4350 гектар (28,7 процент) вырса çапнă. «Восток» хуçалăхра тыр-пул çуррине ытла пуçтарса кĕртнĕ.**

**Пĕтĕмпе 12193 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран 28 центнерпа танлашать.**

**Улăма 2600 гектар çинчен (çапса тĕшĕленин 60 проценчĕ) пухса тирпейленĕ.**

**Ĕнер хирсенче 39 комбайн ĕçленĕ.**

**Кĕрхи культурăсем акма 3041 гектар (46 процент) çĕр хатĕрленĕ.**

Саламлатпăр

***ЗАО «Моргаушский кирпичный завод» сердечно поздравляет работников завода и всех стрителей с профессиональным праздником – Днем строителя! Искренне желает крепкого здоровья, большого счастья, благополучия, новых сил, творческой энергии в трудовой деятельности.***



Хаклăран та хаклă юратнă аннене, кукамая – Кӳстерек ялĕнче пурăнакан **Любовь Петровна ЕРШОВĂНА** августăн 14-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăл-туйăмлă пулмалла пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр. Малашне те ачусемпе, мăнукусемпе, пускилсемпе, мĕн пур тăванпа савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

# Çамрăксемшĕн – тĕслĕх те, юлташ та



**Паян – Физкультурник кунĕ**

***Кăпасра пурăнакан Владимир Витальевич Михайлов аслă шкул хыççăнхи пĕлĕвĕпе инженер-механик пулнине шута илсен вăл паянхи уява питĕ çывăх тăмалла мар пек туйăнать. Анчах та спорта юратнипе, массăллă спорта ачасемпе çамрăксене явăçтарнипе вăл тепĕр профессионал физкультурникран ирттернине ăна пĕлекен кашни çын çирĕплетме пултарать. Çавăнпах Физкультурник кунĕнче вăл саламсем илме тивĕç те.***

Кăпасри сакăр çул вĕренмелли шкул, Юнкăри вăтам шкул, ДОСААФ шкулĕ, Германири çар хĕсмечĕ – çапларах пулнă Владимир Витальевичăн «çын пуласси ачаран паллă» тенĕ çул. Каярах Горький хулинчи автотранспорт техникумĕнче, Чул хулари политехника университетĕнче пĕлӳ илнĕ çамрăк тăван колхозра инженер-механикра тăрăшнă.

Унăн пурнăçĕнче пĕр тапхăр тепринпе ылмашăннă, анчах та спорта вăл нимĕнпе те улăштарман. Футбол-и, полиатлон-и, хоккей-и... – пуринпе те кăсăкланнă. Хăй пĕлӳ пухнă вĕренӳ учрежденийĕсенче яланах пĕрлештернĕ спорт командисенче пулнă. Ытларах чухне тĕрлĕ ăмăртусене йĕкелекенĕ те. Футбол, хоккей, çăмăл атлетика енĕпе пĕрре мар район чемпионĕ пулса тăнă вăл. Чăваш Республикин çуллахи полиатлон енĕпе – бронза призерĕ те.

Паян Владимир Витальевич – уйрăм предприниматель. Унăн хăйĕн ĕçĕ. Çакăнпа пĕрлех вара Юнкă ял тăрăхĕнчи спорт фаначĕн ячĕ те ун çинчех.

Хăйĕн ывăлне футбол мечĕкне «тапма вĕрентнине» ялти ытти арçын ачасем те асăрханă. «Вова пичче, эпир те футболла выляма вĕренесшĕн», – тенĕскерсем вара паян футбол-хоккейра маттур. Халĕ те, çу кунĕсенче, каççерен кашни эрнерех футбол матчĕсем ирттереççĕ Юнкă ял тăрăхĕнче. Кун пекки пирĕн районта пурши татах? Çук тенине ĕненме çăмăлрах. Кăпасран, Ивановкăран, Юнкăпуçĕнчен тата ытти ялсемпе выçăлкăсенчен пухăнаççĕ çамрăксем. Паян вара вĕсен футбол вăййисен çĕнтерӳçине палăртакан ăмăрту иртет. Шăпах уяв кунĕнче.

Хĕлле вара Юнкăсем – хоккейра. Пăр курупкине те вырăнти тăрăшулăхпа туса лартрĕç. Шел те, тăрăшакансен хĕллехи тĕттĕмре пăра çутатса тăма май çук – электричество çутине çитерме укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрехха. Апла пулин те Юнкă тăрăхĕнчи çамрăксем хуйха ӳкмеççĕ: хастарскерсем районта та, республикăра та лайăх результатсем кăтартаççĕ.

Акă кĕçĕннисен ушкăнĕнче футболла выляссипе республика шайĕнчи ăмăртура пĕлтĕр виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ пулсан кăçал – иккĕмĕш. Ачасем маттур. Ăсталăх ӳсет.

Лоцмановсен кубокне çĕнсе илессишĕн иртекен районти ăмăртура виççĕмĕш çул мала тухса çамрăксен команди кубока хăйсенче яланлăхах хăварма пултарчĕ. «Ыран выляма каймалла: команда пухас пулать тенипе нимĕн те пулмасть. Тренировкăсем тăтăш кирлĕ», – питĕ тĕрĕс палăртать çамрăксен тренерĕ, юлташĕ.

Турнирсем ирттерме вара Владимир Витальевич медальсемпе грамотăсене яланах тенĕ пек хăйĕн «кĕсйинчен кăларать». Ачасене хавхалантару кирлине питĕ лайăх ăнланать вăл, шкул ачисем портфолио пухса пынине те. Çулсерен 20–25 пин тенкĕ ачасемшĕн тăкакланин усси пуррине курать вăл. Мăшăрĕ те унăн пуçарăвне ырлать, ăнланать.

«ИП Михайлов» команди – районти ĕçлекенсен спартакиадине хастар хутшăнакансенчен пĕри. Вĕсем ăмăртусене кăмăлтан хутшăнаççĕ, «приказ йĕркипе» мар. Çакă пулать те ĕнтĕ массăллă спорта явăçни.

Юнкăсем юнашар районсене тухса çӳреме те майсем тупаççĕ. «Хамăра кӳршĕсемпе танлаштармалла, унсăрăн спортра «ӳснине» те кураймастăн. Етĕрне районне нумай тухса çӳрерĕмĕр, Воротынецри пăр çине те, – пĕлтерет Владимир Витальевич. – Майсене хамăрăнах шырамалла, спорт валли укçа-тенкĕ питĕ сахал уйăраççĕ-çке». Ку тăрăхри А.Ю. Ильин уйрăм предприниматель те массăллă спорта хăйĕн тӳпине хывать иккен. Апла Юнкă тăрăхĕнче спорт чăн та пурăнать темелле.

Пăрахăça тухнă «Сăран мечĕк», «Ылтăн шайба» турнирĕсем паян ачасене, пĕрпĕр ӳсĕмрисене çеç мар, кашни ӳсĕмри ачана кирлине калать предприниматель. Çавăнпа та ачасене спорта чăннипех явăçма сĕнет Владимир Витальевич. Пĕрре мечĕк тапнипе е шайба çапса янипе сывлăх та, вăй та пулмасть. Ун тавра пухăннă çамрăксене те çавнах калать вăл. Хăй сывă пурнăç йĕрки тытнипе, çамрăксене куллен хавхалантарнипе вара вăл – тĕслĕх те, юлташ та.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Полици хроникинчен**

## Укçа хутаççине пакета ан чикĕр

Транспорт чылай çӳренĕрен автобус чарăнăвĕсенче кирек мĕнле вăхăтра та çын пур. Канмалли кунсенче кутамкаллă-карçинкаллисем хушăннипе çын татах та нумайланать.

Акă Мăн Сĕнтĕрти автобус чарăнăвĕнче эрне вĕçнелле пĕр вăрăлла ĕç пулса иртнĕ. Меллĕ самант шыраса çакăнта пĕр чипер хĕр чарăнура пулнă арçынăн полиэтилен пакетĕнчи барсеткăран 4000 тенкĕ кăларса илнĕ.

Вăрланă укçапа чиперук питĕ «инçе кайнă»: Уголовлă кодексăн 158 статйи таранах. Арçынна вара тимлĕрех пулма ыйтса асăрхаттарас килет: укçана хăвăрăн çумра тытсан шанчăклăрах пулĕ.

## Курăка экспертизăна яма тивнĕ

Полицейскисем Ахмане ялĕ патĕнче полиэтилен пакет йăтнă икĕ каччăна тытса чарнă. Кунсерен кашни çын аллинче сумка-пакет курма пулать, никам та тытса чармĕ тесе шутланă пулĕ-ха йĕкĕтсем. Пакета вĕсем ешĕл курăк тултарнă пулнă: тунисем те, çулçисем те, вăрă курупкисем те. Ку мĕнле ӳсен-тăран пулнине кашниех ăнланчĕ ĕнтĕ. Апла пулсан экспертиза тĕрĕслевĕ хыççăн Шупашкар каччисем умне тепĕр «кĕтменлĕх» тухса тăрасси иккĕлентермест.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 7-9.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх тянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.**

* * *

**Продаю двуспальную кровать. Цена 4000 рублей.**
**Тел.: 8-905-342-10-59.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 4-5.**

* * *

**Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Требуются рабочие для производства керамзитобетонных блоков. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 4-5.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец.**
**Тел.: 8-905-342-39-43. 3-10.**

* * *

**Продаю железобетонные кольца разного диаметра. Доставка. Услуги бормашины-траншеекопателя под водогазопровод, канализацию.**
**Тел.: 8-927-845-58-93, 8-927-860-90-70. 3-5.**

Магазин-салон
ГАЗОВЫЕ ТЕХНОЛОГИИ
п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
тел. 8-987-668-04-83
реклама
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ, КОЛОНКИ
GAZLUX,WOLF,
ПЛИТЫ (газ-контроль)
Разработано совместно ОАО "ГАЗПРОМ-РЕГИОНГАЗ" и ОАО НИИ "ГИПРОНИИГАЗ" специально для Российских условий эксплуатации
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ: SIBERIA, ОЧАГ
Выполняем: проекты газификации, квалифицированный монтаж
Доставка и установка плиты - БЕСПЛАТНО, рассрочка оплаты
г. Чебоксары, Сев. ярмарка,тп №10
тел. 8-951-998-90-77

**Тав сăмахĕ**

Августăн 4-мĕшĕнче Муркашра пирĕн ачан велосипед çухалчĕ. Çакăн пирки эпир районти шалти ĕçсен пайне пĕлтертĕмĕр. Полицейскисем çухалнă велосипеда çийĕнчех тупса пачĕç. Эпир районти шалти ĕçсен пайне пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Малашне те кирек епле йĕркесĕрлĕхе çийĕнчех уçса пама ăнăçусем сунатпăр. **Фоминсен çемйи.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.**
**Тел.: 8-927-668-70-15. 11-13.**

кредитный потребительский
КАПИТАЛ
кооператив граждан
работает на вас
6-23-10
всегда доступные займы
ипотечные займы с использованием материнского капитала
принимаем сбережения под серьёзные проценты
ул. Чапаева, 44 а / 2 8 927 667-48-92
kpkgkapital.ru
работаем с пайщиками

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения»:**

**- с кадастровым номером 21:17:281001:705, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:281001, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5900 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:281001:706, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:281001, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6300 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Продаем земельный участок 35 соток под строительство по адресу: д. Шептаки, ул. Новая. Имеется ограждение, летняя веранда, маленький дом.**
**Тел.: 8-903-066-66-04, 62-9-83.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-905-343-60-63. 7-7.**

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30.
З/п от 25000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 2-5.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 28-50.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
скидки до 35%
подробности по телефонам:
8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ
• на любые неотложные нужды
• на покупку и строительство жилья под материнский капитал
ВНИМАНИЕ! ЛЬГОТНЫЙ ЗАЙМ “СКОРО В ШКОЛУ”
ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ
• пенсионерам льготные % ставки
ДО 31.08.2011 г. ДЕЙСТВУЕТ АКЦИЯ С ПОВЫШЕННЫМИ % СТАВКАМИ
Кредитный потребительский кооператив "Содружество" отделение №3, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23
тел. 62-6-86, 8-919-673-42-19
www.kpksodrugestvo.ru

| | суббота 13 августа | | | | воскресенье 14 августа | | | | понедельник 15 августа | | | | вторник 16 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +19 | +26 | +33 | +23 | +19 | +27 | +32 | +22 | +19 | +27 | +33 | +23 | +19 | +26 | +30 | +21 |
| Давление мм | 746 | 745 | 745 | 745 | 746 | 745 | 746 | 746 | 747 | 747 | 747 | 747 | 748 | 747 | 747 | 746 |
| Влажность % | 76 | 56 | 28 | 69 | 77 | 57 | 35 | 81 | 87 | 59 | 31 | 64 | 78 | 60 | 39 | 58 |
| Ветер | Ю | В | С-В | С-В | В | В | Ю-В | С | С | С-В | С | С-В | С | В | В | В |
| м/с | 2 | 1 | 1 | 2 | 1 | 2 | 2 | 1 | 2 | 3 | 3 | 3 | 2 | 5 | 3 | 4 |
| Солнце восход/заход | | 05:19 | 20:35 | | | 05:21 | 20:33 | | | 05:23 | 20:31 | | | 05:25 | 20:28 | |
| Луна восход/заход | | 19:54 | 04:54 | | | 20:08 | 06:10 | | | 20:21 | 07:24 | | | 20:34 | 08:37 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и Совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования выражают глубокое соболезнование Федотовой И.П., директору МБОУ «Сосновская основная общеобразовательная школа» по поводу безвременной кончины

**ОТЦА.**

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул коллективĕ кунта нумай вăхăт хушши математика учителĕнче ĕçленĕ

**Максим Максимович ТИМОФЕЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают искреннее соболезнование заведующей секцией «Обувь-галантерея» универмага Большесундырского райпо Тимофеевой Н.М. по поводу безвременной кончины отца

**ТИМОФЕЕВА Максима Максимовича.**

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул коллективĕ кунта пуçламăш классен учителĕнче ĕçленĕ

**Любовь Арсентьевна ВАСИЛЬЕВА**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, явапллă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапллă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 12.08.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4282.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.